Çур аки – 2007

Çурхи кунпа туллин усă курнине палăртма кăмăллă

***АВТОРТАН:** Çурхи тĕш тырăпа пăрça йыши культурăсене акассине кăçал Михаил Николаевич Шишокин ертсе пыракан "Восток" ял хуçалăх производство кооперативĕ районта пуринчен малтан вĕçлерĕ. Çак кунсенче районти ял хуçалăх предприятийĕсенчи механизаторсем, мехбригадăсем тата уй-хир бригадисен ĕçченĕсем хушшинчи çур аки конкурсĕн членĕсем иртнĕ кунсенче хуçалăхра пулса курчĕç, хуçалăх ĕçченĕсем çывăх вăхăтрах çĕр улми лартса пĕтерессине те шанса мал туртăмлă Мулкачкассисемпе Тереçсене çур акине ăнăçлă урттерсе пынипе саламлаççĕ, малашнехи ĕçсенче те ăнăçусем сунаççĕ.*

Урамра çу уйăхĕн виççĕмĕш вунă кунлăхĕ умра тăнă чух паян тĕп сăмах кĕрхи культурăсемпе нумай çул ӳсекен курăксене апатлантарасси пирки пымасть, çурхи хитре кунпа тулли хăватпа усă курса çурхи тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсене вăхăтра акса хăвармалла. Халĕ кая юлмасăр пурнăçланă ĕç кĕркунне кĕлетсене çăкăрпа тулли тултарĕ, хресченĕн тĕп тĕллевне çӳле çĕклĕ. Çăкăртан асли çук. Сĕтел çинче çăкăр пулсан, вылăх та хунĕ, çĕнĕ шухăш-ĕмĕтсем те çуралса пурнăçа кĕрĕç, экономика аталанĕ. Паян вулавçăсем патне çур акипе çыхăннă çĕнĕ хыпар çитеретпĕр: "Восток" ял хуçалăх производство кооперативĕ районта пуринчен малтан çуртрисем акас ĕçе вĕçлерĕ. Кооператив ĕçченĕсем паян юлашки гектарсем çинче çĕр улми лартаççĕ, çур акирен пушаннă техникăна управа лартассипе ĕçлеççĕ. Мĕн каланине цифрăсем çине куçарсан, куç умне çакнашкал ӳкерчĕк тухать.

Çурхи уй-хир ĕçĕсен планĕпе килĕшӳллĕн Мулкачкассисемпе Тереçсен кăçал самай пысăк лаптăк çинче уй-хир ĕçĕсем пурнăçламаллаччĕ: кĕрхи культурăсемпе (85 га) нумай çул ӳсекен курăксене (225 га) вăхăтра нӳрĕк тытса апатлантармаллаччĕ, 300 гектара яхăн çуртрисем акмаллаччĕ, 9 гектар выльăх кăшманĕпе хĕрлĕ кăшман пулмаллаччĕ, пĕр гектар майлă вăрлăхлăх кăшман, 20 гектар – çĕр улми. Паянхи куна "иккĕмĕш çăкăрсăр" пуçне ытти лаптăксем çинче ĕçсем вĕçленнĕ ĕнтĕ. Хуçалăх çуртрисене пĕтĕм лаптăк çинчех хĕреслĕ майпа минераллă удобренипе акрĕ, паха вăрлăх кăна акса хăварчĕ.

Камсем палăрчĕç-ха уй-хир ĕçĕсенче?

Çур акине хуçалăх, тĕпрен илсен, çамрăксемпе ирттерчĕ. Пĕтĕмлетсе пăхсан, хуçалăх ертӳçипе пĕрле 24 çын хутшăнчĕ кăçалхи ака-суха ĕçне. Вĕсем кашниех тав сăмахне тивĕç. Акă çĕр хатĕрленĕ çĕрте ЧР Президент стипендиачĕ Алексей Артемьев, Вячеслав Андреев, Саша Иванов, Сергей Семенов механизаторсем, акара Алексей Артемьевпа Дмитрий Бычков, Вячеслав Пушкинпа Александр Пушкин трактористсемпе Борис Иванов, Валерий Бычков, Игорь Вязов, Анатолий Гордеев акаçăсем, хире вăрлăх кăларассипе Виталий Иванов тата удобрени кăларассипе Михаил Иванов водительсем, складра тырă тиессипе Станислав Максимов, Николай Шуляев, Вениамин Терентьев тата Елена Самойлова ĕçченсем, хирте ĕçлекенсене кунне икĕ хут вĕри апат çитерессипе Лидия Пушкина повар, складри ĕçсене йĕркелесе пынă Людмила Никитина завсклад çурхи уй-хир ĕçĕсен планĕпе килĕшӳллĕн хăйсен тивĕçĕсене ответлăха туйса пурнăçларĕç. Çакă ĕнтĕ вăл ăнăçу никĕсĕ. Ку ĕç паян хире тухсан алă тупанĕ çинчи пекех курăнать: хирсем тикĕс те таса, маларах акнисем шăтса тухнипе пысăк тухăç шантараççĕ.

Каласа хăвармалла, çур аки ĕçĕсене хуçалăх ертӳçи Михаил Николаевич Шишокин самантлăха та алăран вĕçертмерĕ. Ертӳçĕ шайĕнче 10-мĕш çур аки ирттернĕ председатель кăçал çурхи ака-суха ĕçĕсен планне хăй хатĕрлерĕ, агроном ĕçне пурнăçласа та хир тăрăх хăех çӳрерĕ. Çапла, хуçалăхра кадрсен ыйтăвĕ пур. Ĕç тӳлевĕ пирки калас пулсан, Мулкачкассисем кăçал çур акире пурнăçланă пĕр норма-сменăшăн 311 тенкĕ илĕç. Çакă тата ĕçченсен ыйтăвĕсене вăхăтра татса пани майăн 1-мĕшĕнче пуçланă çур акие хуçалăхра пĕр çын пек пулса вăй хурса 13 талăкра вĕçлеме майпачĕ. Умра – 2-3 кунлăх çĕр улми лартас ĕç.

– Çур аки вĕçленсе пынă май хамăр ума ферма территорийĕсене тислĕкрен тасатас тĕллеве лартатпăр, – терĕ уйран тавраннă май ферма çумĕпе иртсе пынă чух хуçалăх ертӳçи Михаил Николаевич Шишокин. Хирте вара малтан акнă анасем калчаланма пуçлани ырă малашлăха шантарать.

Хирте çур аки ĕçĕсем вĕçленсе пыни хуçалăхра ĕç шавĕ лăпланнине пĕлтермест. Механизаторсем акаран пушаннă техникăна çуса тасатса управа лартассипе ĕçлеççĕ. Техникăна пăхасси пирки каласнă чух хуçалăх ертӳçи те, механизаторсем те ЧР Патшалăх техника надзорĕн Муркаш районĕнчи аслă инспекторне С. Николаева вăхăтра та çирĕп ыйтнипе çур акине техникăна тĕплĕ хатĕрлесе тухма май туса панăшăн тав турĕç. Сăмах май, çур акиччен хуçалăхри ĕçе яваçмалли пур трактор та техосмотр тăнă. Акă камран тĕслĕх илмелле!

Председатель машини хиртен хире васкарĕ



Ĕçре малта пыракан Н. Борисов – ыттисемшĕн тĕслĕх.

Акаçăсемпе механизаторсем тата хуçалăх ертӳçи Ю. Шишокин (сылтăмран виççĕмĕшĕ) паян пĕр çыхăра. Çапла пулмалла та.

Славит Иванов, Леонид Кулаков, Николай Гурьев, Илья Колбасов сеялкăна тырă-удобрени тултарнă вăхăт.

Малашлăха пăхакан хресченĕн паян ларса канма та вăхăт çук: пиççе çитнĕ çĕре вăхăтра хатĕрлемелле, планпа пăхнине кая юлмасăр акмалла-лартмалла. "Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕн çак çур акире пĕтĕмпе 2379 гектар çинче çурхи ĕçсем пурнăçламалла. Вăл шутран 232 гектар çинчи кĕрхи культурăсен тата 621 гектар çинчи нумай çул ӳсекен курăксен лаптăкĕсенче 100 проценчĕпех çур акин малтанхи кунĕсенчех сӳрелесе нӳрĕк тытнă та ĕнтĕ, 641 гектар çинче çуртрисем те акса пĕтернĕпе пĕрех, 30 гектар çĕр улмие лартас ĕçсем кал-кал пыраççĕ.

– Паян пуш параппан çапса ларма вăхăт çук. Çур аки тапхăрĕ иртсе пырать те хирти ĕçсем уйрăмах пысăк тимлĕх ыйтаççĕ. Вăхăтра акатăн – тырăллă пулатăн. Ваттисен çак асăрхаттарăвне самантлăха та пуçран кăлармастпăр паян. Çурхи уй-хир ĕçĕсен планĕпе килĕшӳллĕ çирĕплетнĕ пур ĕçре вăй хуракансем те хăйсен ответлăхне çирĕп туяççĕ, хушнă ĕçе вăхăтра тата агротехникăна пăхăнса тĕплĕ пурнăçласаççĕ. Тавах вĕсене хăйсем панă сăмаха çилпе вĕçтерменшĕн, – терĕ çăмăл автомашина Атапай уйрăмĕн хирнелле пăрăннă май "Оринино" хуçалăх ертӳçи Юрий Николаевич Шишокин.

Календарь çинче çу уйăхĕн 16-мĕшĕ. Çуллахи ăшă тинех çитнипе йывăç-курăк хăвăрт вăй илсе ешерме пуçларĕ. Акă маларах акнă анасем те симĕс тум тăхăнма пуçлани курăнать. Ĕшнере вара шăпчăк юрлать, çĕр ĕçченĕн ĕçĕшĕн савăнать. Юнашар пусăра çĕр улми лартакан агрегат çул хĕрнелле тухни курăнчĕ. Чарăнтăмăр. Çĕр ĕçĕнче пуян опыт пухнă Вячеслав Николаевич Замков механизаторăн экипажĕ пулчĕ ку. Сажалка çинче Виталий Музыковпа Виталий Ступин ĕçченсем. Механизатор кабинăран тухсанах акаçăсен ĕçне малтан ырăпа палăртрĕ:

– Вĕсем шанчăклă ĕçлемесен, трактора хир тăрăх уттарнин усси пулĕ-и? Çук. Трактор рульне тытнăранпа кăçал 36 çул. 1978 çултанпа вара эпĕ "Оринино" хуçалăх механизаторĕ. Çак хушăра çулленех çур акине хутшăнтăм. Пĕрремĕш çур акирех çĕр улми лартма тивни халĕ те асрах. Атте уй-хир бригадин бригадирĕччĕ те самай ăс пачĕ ун чухне. Унăн кашни сăмахне ăша хыврăм та паянччене вăл йĕркене пăхăнса пыратăп. Акă ывăлăм Валера та кăçал çур акире: МТЗ-82 тракторпа тырă акать. Çурхи уй-хир ĕçĕсен планĕпе çĕр улми лартма хуçалăхĕпе икĕ агрегат хутшăнмалла. Çĕр улми сорчĕсене илсен, вĕсем "удача" тата "петербургский" сортсем.

Мĕнех, механизатор хăй ĕçне лайăх пĕлни куç умĕнчех. Ку вара хăех ăнăçу никĕсĕ. Юнашар хирте çĕр хатĕрлессипе тăрăшакан Анатолий Борисович Вязов та ĕç стажĕпе В. Замковран уйрăлсах тăмасть. 31 çул вăл механизаторта. Вăл шутран 26 çулне – гусеницăллă тракторпа тăван хуçалăхра. Паян вăл хире акса-лартса пыракансем валли ытти çулхисем пекех çĕр хатĕрлет.

Председатель аллинчи кĕсье телефонĕ сасă пачĕ. Çĕньял Оринин хирĕнче çĕр хатĕр иккен. "Акма пуçламалла. Кĕçех çитетпĕр!" – пулчĕ Юрий Николаевич хуравĕ. Çăмăл автомашина каялла çаврăнчĕ те тусан çĕклентерсе Оринин еннелле васкарĕ. Уяр кун. Çак тапхăрăн пĕр самантне те ĕçсĕр ларса ирттермелле мар. Хăвăрах куратăр, Орининсем çапла тăваççĕ те.

Пĕчĕк хуçалăх мар Оринин тăрăхĕ, анчах уй-хирсемпе иртнĕ чух кашни лаптăкрах ака-суха агрегачĕсем ĕçлени курăнать. Тĕрĕсех, çурхи уй-хире тулли те çителĕклĕ ĕç кăна илем кӳрет. Уйсенчи çулпа Çĕньял Оринин еннелле ыткăннă чух çакна курса Орининсен çывхаракан акатуйра туллин савăнма сăлтав пулассипе чун хĕпĕртерĕ.

Хĕвел анăçалла кайрĕ пулсан та, Орининсем киле кĕме васкамаççĕ-ха. Акă тĕттĕм пуличченех ĕçлекенсем патне каçхи апат та тухрĕ.

Çĕньял Оринин патĕнчи пысăках мар хура лаптăк уй тӳпинчен инçетренех курăнать.

– Пысăк лаптăксене акса пĕтертĕмĕр те çакнашкал пĕчĕк уйсем ĕçе пĕтĕмĕшле вĕçлессине чарса тăраççĕ. Анчах вĕсем валли те шутлă кунсемпе шутлă сехетсем кăна юлчĕç, – терĕ уй тӳпине тухсан хуçалăх ертӳçи.

Çитрĕмĕр. Çĕр хатĕрлекенсем кайса пĕтмен пулсан та, хире ака агрегачĕсем çитсе вырнаçнă та.

– Уяр кунăн кашни сехечĕ паха. Вăй хурса тимлесен ку хире паянах акса пĕтерĕпĕр, – кĕтсе илчĕ пире 23 çул механизаторта ĕçлекен Анатолий Скворцов механизатор.

– Çапла тăвăпăр та. Кая юлсан каю шăтĕ, – чăнласа та шӳтлесе каласăва малалла тăсрĕ унпа пĕрле ĕçлекен Георгий Данилов акаçă. Ĕçлекен шӳтлет пулсан, унăн ĕçĕ те кал-кал каять. Çапла пултăрччĕ те. Инçех мар норма-смена ĕç тăвассипе хуçалăхри çур аки чемпионĕнче пыракан Николай Алексеевич Борисов çĕр хатĕрлесе пĕтернĕ хыççăн хăйне шанса панă ДТ-75 "хурçă ута" тĕрĕслеве тăратнă. "Ку хирте ĕçленипех çур аки вĕçленмерĕ-ха. Техника вара куллен кирлĕ", – терĕ вăл тракторăн ĕçлев агрегачĕсене пăхса илнĕ май.

Вăрман çумĕнчи тепĕр хирте Николай Иванович Гурьевпа Илья Андреевич Колбасов механизаторсем юлашки гектарсем акаççĕ.

– Ĕçĕ те кунта тепĕр пĕр-ик заправкăлăх юлчĕ, – эпир çитнĕçитмен хыпарларĕ Н. Гурьев куçĕсене хиртен илмесĕр. Николай Иванович урăхла пултараймасть те пуль. Трактор штурвалĕ умĕнче 30-мĕш çур аки ирттерет вăл кăçал. Çак хушăра хăйĕн ĕçĕпе хуçалăхра вăй хуракансем хушшинче ырă ята çеç тивĕçнĕ Н. Гурьев паян хуçалăхра механизатор-водительсен ĕç династийĕн пуçлăхĕ те: Сергей ывăлĕ МТЗ-82 тракторпа, Иван вара ЗиЛ-554 автомашинăпа ашшĕн ĕçне малалла тăсаççĕ. Çакна кăçал 35-мĕш çур акине хутшăнакан Илья Андреевич Колбасов механизатор та çирĕплетрĕ. Пĕрле ĕçлекенсем панă хакран пысăкки пур-и вара? Династисем тенĕрен, ку хутĕнче çумрах тепĕр династи членĕ те пулчĕ. Вăл – хире удобренипе вăрлăх турттаракан Славит Моисеевич Иванов водитель. 32 çул хăй суйласа илнĕ ĕçпе ĕçлет вăл. Йăлтах тăван хуçалăхра. Пиччĕшĕпе шăллĕ Григорийпе Александр та хуçалăх водителĕсемех. Кашниех хăйсене хушнă ĕçе вăхăтра та пахалăхлă пурнăçлаççĕ. Çавăнпах ялта та хисепре. Çакна пытармарĕ ку ушкăнра пĕрле ĕçлекен Леонид Кулаков акаçă.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем те хир ĕçченĕсенчен кая юлмаççĕ. Р. Блинова ертсе пыракан Патаккассинчи сĕт фермине пырса кĕтĕмĕр. 36 çынран тăракан ĕç коллективĕ хăйсен тĕп ĕçне тунипе пĕрлех паян фермăна ĕне сăвакансемпе техник-осеменаторсен районти конкурсне хатĕрлет. Тивĕçлĕ ĕçлекенсем унта та пит хĕретмессе шанас килет.

– Хуçалăхри 5 фермăран (сĕт, вăкăр, пăру фермисемпе сысна фермисем иккĕ) нихăшĕ те куç хыçне тăрса юлман. Çăва тухнă пĕрремĕш кунранах вĕсене тытакан сарайсене çитес хĕле хатĕрлес ĕçе кӳлĕнтĕмĕр, – тет хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ Рената Пушкова.

А. Вязов 26 çул гусеницăллă тракторпа хуçалăхри çур акине хутшăнать.

Г. Данилов акаçăпа А. Скворцов механизатор акара куллен пĕрле.

Р. Блинова ертсе пыракан Патаккассинчи сĕт фермин коллективĕн пĕр ушкăнĕ.

Зоотехник сăмахĕсене ĕç кăтартăвĕсем çирĕплетеççĕ. Кăçал хуçалăх пурĕ 3315 центнер (пĕлтĕр – 2854 ц), пĕр ĕне пуçне 1617 кг (1392 кг) сĕт сунă, самăртма хупнă сыснасем талăкра вăтамран 579 грамм, майăракаллă шултра выльăхсем 1183 грамм ӳт хушнă.

Хуçалăхĕпе кăçалхи 4 уйăхра вăтам ĕç укçи 3,1 пин тенкĕ пулнă пулсан, выльăх пăхакансен вăл 3,5 – 5 пин тенкĕпе танлашать.

"Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕнче уй-хирте те, выльăх отраслĕнче те ĕçсем кал-кал пыраççĕ тесе çирĕплетсех калама пулать.

Кăларăма А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.